Изоркин А. Иванов каçĕ : [Мускавра К.В. Иванова чысласа ирттернĕ асăну каçĕ çинчен, 1960 ç.] / А. Изоркин // Коммунизм ялавĕ. – 1985. – 6 утă..

ИВАНОВ КАÇĔ

Петĕр Хусанкай 1964 çулта Шупашкарта кăларнă «Асталăхпа чăнлăх» кĕнекере «Нарспи юрăçи çитмĕлте» сыпак пур. Ку вăл поэт 1960 çулта И. Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен педагогика институтĕнче чăваш литературин классикне Константин Васильевич Иванова чысланă чухне каланă сăмах. Акă, мĕнле пуçланать вăл:

«Тăватă кас кăна маларах Константин Ивановăн çакăн евĕрлех сăн-сăпачĕ Литераторсен тĕп çуртĕнче—Мускавра — çакăнса тăчĕ. Ана тĕрлĕ тĕслĕ чĕрĕ чечекпе хашакласа илемлетнĕччĕ. Пĕтĕм чăваш литературин историйĕнче пирĕн уйрăм сынсене çапла Мускав кĕрекине лартса чысласси икĕ хут кăна пулчĕ-ха. Иккĕшĕ те пархатарлă совет саманинче пулчĕ: 1928 çулта сакарвунна çитнĕ Иван Яковлевич Яковлева хисеп турĕ Мускав, кăçал — унăн çитмĕл тултарнă вĕренекенне, халăх асăнче нихçан ватăлми тивлетлĕ сăвăçăмăра, ыталаса илчĕ. Ансăртран мар пулĕ ку. Тивĕçлипех пулĕ. Яковлев çинчен Ленин мĕн каланине пурте пĕлетпĕр. Иванова — вуласа ĕлкĕреймен Владимир Ильич. Анчах поэтăн аллă çул ытла ĕлĕкрех чăваш чĕрине пырса тивнĕ чăвашла сăмахĕ, унан таса çăлкуç шывĕ пек шăнкăртатса юхса тăракан сăвви-юрри халăхăмăра «наци тĕлĕщĕнчен çĕклес» ĕçре калама çук нумай тунине пурте туятпăр».

Петĕр Хусанкай кунта 1960 çулхи май уйăхĕнче Мускавра ирттернĕ Иванов каçĕ пирки сырать. Çирĕм пилĕк çул çитрĕ унтанпа. К. В. Иванов çитмĕл çул тултарнине Тăван çĕршыв тĕп хулинче уявлассине пуçаракансемпе хатĕрлекенĕсем эпир, ун чухне Мускаври асла шкулсенчи студентсем, пулнă.

Нумайччĕ пирĕн йышра Чăвашран килнĕ яшсемпе хĕрсем. Манпа пĕрле Мускав университетĕнче çирĕме яхăн чăваш вĕренетчĕ. Ветеринари академийĕнче Чăвашъен ачисене вунпĕр тупрăмăр, Ялхуçалăх академийĕнче — саккăр. Хурçă, экономикăпа статистика, ашпа сĕт технологийĕн институчĕсенче, Партин аслă шкулĕнче, Чайковский ячĕпе хисепленекен консерваторире тата ытти аслă шкулсенче хамăр пĕлнисех çĕр çын ытлаччĕ. Пĕр çĕре пухакан чăмар вăл—Луначарский ячĕпе хисепленекен театр искусствин институтĕнчи чăваш студийĕ. Пирĕн вахăтра унта çирĕм икĕ яш-кĕрĕмпе хĕрупраçчĕ. «ГИТИС ачисем», теттĕмĕр вĕсене.

Асра юлмалли ĕçсем мĕн тунă-ха эпир? 1959 çулта РСФСРти писательсен пĕрремĕш съездне Чăваш республикинчен килнĕ делегатсемпе тĕлпулу ирттертĕмĕр. ГИТИС общежитийĕн хĕрле кĕтесĕсенче пулса иртрĕ вăл. Студентсем патне хаклă ханасем—Петер Хусанкай, Александр Калкан тата Алексей Талвир писательсем пычĕç. Унтах чăваш студийĕнче вĕрентекен Дмитрий Данилович Данилов та пулчĕ.

«Нарспи» авторĕ 70 çул тултарнине анлăн паллă тума шутламанччĕ. Çапла каласса тăтăлтăмăр: Геннадий Хлебников поэт пултарулăхĕ çинчен пĕчĕк доклад хатĕрлет, манăн йыхрав хучĕсем хатĕрлемелле, Виталий Алексеевăн концерт пирки тимлемелле. Аудитори пирки университетра каласса татăлмалла.

Калаçнă—тунă. ГИТИС ачисем тӳрех савăнтарса ячĕç: вĕсем пĕтĕм «Нарспи» поэмăна пăхмасăр калама пĕлеççĕ иккен! Çамрăк артистсем темиçе юрă юрласа пама пулчĕç. Хамăр пата Мускаври чăваш строителĕсен хорне те чĕнтĕмĕр. Ара, ку коллектив 1957 çулта Мускавра ирттернĕ Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен фестивалĕн лауреачĕ-çке-ха! Программа хатĕр. Йыхрав хучĕсене салатмалла.

Ырă канаш паракан та тупăнчĕ: Иванов каçне ирттерме хатĕрленни çинчен РСФСРти Писательсен союзĕн правленине пĕлтерĕр.

Хумханса пырса кĕчĕ студентсен делегацийĕ унта. Правлени секретарĕ Алим Кешоков иккĕленĕве тӳрех сирчĕ:

— Ку пысăк событие Литераторсен тĕп çуртĕнче паллă тума тăрăшатпăр. Мускавра чавашсем нумай-и? Апла пулсан, йыхрав хутне пилĕкçĕр çапас. Эпир ăна хамăрах типографинче хатĕрлетпĕр. Программăпа килĕшмелле. Докладчик пур, пĕчĕк концерт ирттерни питĕ аван. Программăри литература пайĕ пирки Хусанкайпа канашлăпăр. Иванов каçне ирттернине эсир чăваш Писательсен союзне пĕлтернĕ-и? Пĕлтермен? Çук, çук, апла юрамасть. Апла пулсан, Хусанкая Мускава чĕнетпĕр. Урахла пулма пултараймасть. Тĕп хуçасăр ирттерсен, акăшмакăш лайăх япалан та тивĕçлĕ сулăмĕ пулмĕ.

Чăваш поэзийĕн çак уявне ирттернĕ май Хусанкая икĕ хутчен Мускава пыма тиврĕ Стромынкăри общежитире пурăнатпăр ун чухне. Дежурнăй мана шыраса тупрĕ:

— Телефон патне пырăр!

Вокзалтан Хусанкай шăнкăравлать иккен. Шупашкартан вăл Константин Иванов портретне илсе килнĕ:

— Пĕр-икĕ çамрăк тупса, хăвăртрах килĕр. Пĕччен мар. Пĕччен тыткалама май çук. Ана Литераторсен тĕп çуртне кайса çакмалла.

Петр Терентьевпа Валерий Макаревские ăшă ыйхăран вăратрăм.

Иванов каçĕ ыран тенĕ чух пулчĕ ку. Эпир унччен пилĕкçĕр билет салатрăмăр Мускаври чăвашсем хушшинче. Акă, майăн 27-мĕшĕ те çитрĕ. Чăваш культурин, чăваш литературин пысăк уявĕ евĕр иртрĕ «Нарспи» авторĕ çитмĕл çул тултарнипе чыслани. Литераторсен тĕп çурчĕ чăвашсемпе тулса ларчĕ. Ытларахăше — студентсемпе Мускаври чăваш рабочийĕсем. Хаклă поэтамăра чыс тума ватă коммунистсем, 1918 çултанпа парти членĕсем В. А. Алексеевпа М. Р. Рублев пынă. Пире столицăра пурăнакан паллă ученăйсемпе А. А. Изотовпа, Иван Яковелвич Яковлев мăнукĕпе, И. А. Яковлевпа, паллаштарчĕç. Иккĕшĕ те профессорсем.

Пĕр вăхăтрах интернациллĕ уяв каçĕ те пулчĕ ун чухне. Пиренпе пĕрле Мускав писателĕсем, Пушкăртран килнĕ хăнасем ларчĕç, тĕрлĕ халăх представителĕсем пулчĕç. Шел ĕнтĕ, унта кам-кам пынине çырса паллă туман. Геннадий Хлебников, авă, Польша аспиранчĕсене илсе пынине астăватăп. Манпа пĕрле Тува тата таджик каччисем пычĕç. Ытти чылай студентсем те çак каçа хăйсен юлташĕсене чĕннĕччĕ. Ман юлташсем Иванов каçĕпе питĕ кăмăллă юлчĕç. Мĕнпе асра юлчĕ-ха вăл?

Иванов каçне Алим Кешоков уçрĕ. Геннадий Хлебников Константин Васильевич Ивановăн ăсталăхĕпе пурнăç çулĕ çинчен доклад туна хыççăн литература пайĕ пуçланчĕ. Тĕрлĕ халăх поэчĕсем, вырăсла е хăйсен чĕлхипе, «Нарспи» авторне халалланă сăвăсене вуларĕç. Унтан Мускаври тăлмачăсем хăйсем Ивановăн вырăсла куçарнă ĕçĕсемпе паллаштарчĕç. Мускав университетĕнчи Озеров аспирант «Шуйттан чури» трагедие вырăсла каласа пачĕ. Унтан чăваш студийĕн студенчĕсем сцена çине тухрĕç, «Нарсни» поэмăн сыпăкĕсем шăнкăравлăн янăраса кайрĕç: «Сарă хĕр», «Нарспи ĕçĕ», «Тарни», «Вăрманта», «Тăватă виле» сыпăксене Аля Чиркова, Иван Митюков, Никандр Леонтьев, Алексей Афанасьев, Вячеслав Кудряшов вуларĕç. Çак уявăн литература пайне Валерий Евдокимов Петĕр Хусанкай «Нарспи» авторне халалланă савапа (ăна вырăсла çырначчĕ) вĕçлерĕ.

Иванова чыслама пухăннисене çамрăксен концерчĕ те кăмăла кайрĕ. Мускаври консерватори студенчĕ Калидин Петров ертсе пыракан чăваш строителĕсен хорĕ «Шĕшкĕлĕхре шыв юхать», «Чентĕрлĕ пĕр кĕпер», «Çĕмĕрт çеçки çурăлсан», «Амăртуллă ташă» юрăсем шăрантарчĕ. Виталий Алексеев флейта валли хатĕрленĕ концерта каласа пачĕ. Çамрăк артистсем те савăнтарчĕç: малтан пурте пĕрле «Сĕрен», «Линка-линка» тата ытти темиçе юрă юрласа пачĕç, çамрăксен ташшине кăтартрĕç.

Конферансье пирки те каламалла: «Нарспи» сыпăкĕсене вуланинчен пуçласа концерт мĕн вĕçлениччен çак ĕçе ГИТИСри пултарулла Валерий Яковлев ертсе пычĕ.

Петĕр Хусанкай пухăннисене тав сăмахĕ каларĕ, Константин Ивановăн чăваш халăх пурнăçĕнчи пĕлтерĕшне пĕтĕмлетрĕ.

Программăра мĕн палăртнине вĕçлесен, баянистсем чăваш ташши выляса ячĕç... Нумайччен саланмарĕ уява пынă халăх. К. В. Иванова çапла чыс туни çинчен Мускаври хаçатсем те çырчĕç.

А. ИЗОРКИН,
истори наукисен кандидачĕ.